## Кайăксем – пирĕн туссем

*(Вырăс чĕлхеллĕ шкулта 5-мĕш класра урттермелли урок тĕслĕхĕ)*

***Л.В. Ишмуратова, Т.А. Степанова**, Çĕнĕ Шупашкарти 19-мĕш шкулта чăваш чĕлхипе литератури вĕрентекенсем*

**Умĕн калани.**

Ку урок ачасене çĕнĕ информаци илме те, илнине çирĕплетме те, кайăксене, çут çанталăка упрас, юратас туйăма аталантарма та май парать. Урок сăмахсен йышне ÿстерме, ачасен пуплевне çĕнĕ сăмахсемпе пуянланма; аудировани хăнăхăвĕсемпе вулав техникине ÿстерме; пĕр-пĕринпе хутшăнма, харпăр хăй ĕçне хаклама, çитĕнÿ патне талпăнма май парать. Ачасем пĕр-пĕрне итлеме те, çын шухăшне шута хума, хисеплеме вĕренеççĕ. Çавăн пекех çакăн пек уроксенче вĕсем халăх умĕнче калаçма, вĕреннĕ темăна пĕтĕмлетсе калама хăнăхаççĕ.

Урокра компьютерпа усă курни вăхăта перекетлеме, чылай ĕç тума пулăшать. Кĕске хушăра пысăк калăпăшлă информаци пама май парать, ачасен пĕлÿ шайне, активлăхне ÿстерме пулăшать.

Ачасене вĕрентнĕ чух тĕрлĕ мелпе тата меслетпе усă курни вĕсен ĕçлес кăмăлне тата активлăхне ÿстерет.

**Технологисем:** информаципе хутшăну; проблемăллă вĕренÿ; вăйă, сывлăха упрас, харпăрлăха аталантарас, ИКТ-технологисем.

**Харкамăн (пайăррăн) пĕлÿ илмелли тĕллевсем:** таврари илемлĕхе курма, сăнама, илемлĕхпе савăнма вĕренни; тĕллевсем лартса йывăрлăхсене çĕнтерме хăнăхни; çут çанталăкри мĕн пур чĕрĕ япаласене упрас, сыхлас, шеллес туйăма аталантарни.

**Предметăн пĕрлĕхлĕ результачĕсен тĕллевĕсем:** ĕç йĕркине, ăна пурнăçлама кирлĕ информацие вĕренÿ кĕнекинче шыраса тупни, ĕçе тунă май вăхăтпа пĕлсе усă курни; шухăша тĕрĕс те çыхăнуллă каласа пама вĕренни; вĕренÿ моделĕсемпе ĕçлеме хăнăхни; вуланă текстпа ĕçлеме, унта кирлĕ информаци тупса тĕрлĕ тĕллевпе усă курма пĕлни.

**Предметăн ятарлă пĕлÿ илмелли тĕллевĕсем:**

***1. Вĕренекенсен пĕлӳ, пултару, хăнăху ĕçĕ-хĕлĕ, технологисем:*** çĕнĕ вĕренӳ материалне пĕрремĕш хут вĕренни, ăнланупа объект хушшинчи çыхăнусене палăртни; текста илемлĕ вулама, вĕреннĕ сăмахсене çыру тата калаçу пуплевĕнче курса е илтсе ăнланма, вĕсемпе вырăнлă усă курма хăнăхни; кайăксем çинчен анлăрах пĕлӳ илесси, вĕсен ячĕсене çуркунне çинчен аса илсе çирĕплетни, çĕнĕ сăмахсемпе усă курса предложенисем тĕрĕс йĕркелени.

***2. Вĕренӳ хевти-талпанавĕ:*** кĕнекере панă текстри шухăшсене хак пама пултарни.

**Мелпе меслетсем:** сывлăх сунни; дежурнăйпа калаçни; пуплев зарядки; урок темипе тĕллевне ачасемпе пĕрле палăртни; ачасене шухăшлама ыйтни; çĕнĕ сăмахсене чăвашларан вырăсла куçарни; сăмах майлашăвĕсем тупни, предложенисем йĕркелени; текстпа ĕçлени (словарь ĕçĕ, учебникри текста вулани, çĕнĕ сăмахсене текстра тупса предложенисене куçарни); ăнланнине ыйтусем парса тĕрĕслени; диалог туни; видеоролик пăхни; *мĕн тăвать?* ыйтуллă «Хĕвел» кластер туса вĕреннине çирĕплетни; кану саманчĕ (физкультминутка туни); грамматика материалĕпе ĕçлени (глаголăн пулас вăхăчĕ); илнĕ пĕлĕве тата хăнăхусене çирĕплетни; интеллектуаллă рефлекси (вырăсларан чăвашла куçар); киле ĕç пани (пĕрне суйласа илмелле).

**Словарь ĕçĕ:** курăк ăшĕнче – в траве, тĕмĕ ăшĕнче – в кустах, типĕ курăк – сухая трава, йăтаççĕ – таскают, пĕтереççĕ – уничтожают, йăва – гнездо, хăвăл – дупло, тĕк – перо.

**Аталантару тĕллевĕ:** «Кайăк йăвисем» текст çине таянса ачасен пуплевне, ăс-тăнне, логикăллă шухăшлавне, кăмăл-туйăмне, илемлĕ вулав хăнăхăвĕсене аталантарасси, тишкерме тата пĕтĕмлетӳ тума вĕрентесси.

**У р о к ю х ă м ĕ**

**I. Класа урока йĕркелени.**

В ĕ р е н т е к е н. Ырă кун пултăр, ачасем!

А ч а с е м. Ырă кун пултăр, вĕрентекен!

В ĕ р е н т е к е н. Аван-и? Сывах-и? Эпĕ сире курма хавас!

А ч а с е м. Эпир те сире курма хавас!

**II. Пуплев хăнăхтарăвĕ. Çанталăк çинчен калаçни.**

В ĕ р е н т е к е н. Паян класра кам дежурнăй?

В ĕ р е н е к е н. Паян класра эпĕ дежурнăй.

В ĕ р е н т е к е н. Класра кам çук? (*Дежурнăй пурте пуррине е кам çуккине пĕлтерет.*) Доска умне тух, тархасшăн. Эпĕ паян дежурная корреспондент пулма сĕнесшĕн. Эсĕ хирĕç мар-и? Хирĕç мар пулсан сана микрофон паратăп. Эсĕ вара ачасенчен паянхи çанталăк çинчен ыйтса пĕл.

– Паян ака уйахĕн миçемĕшĕ?

– Мĕнле кун?

– Урамра мĕнле çанталăк тăрать? (*Урамра ăшă çанталăк тăрать, тӳпе таса, ăшă çил вĕрет.*)

– Юр ирĕлет-и?

– Паян урамра миçе градус ăшă?

– Кайăксем вĕçсе килнĕ-и?

– Сире паянхи çанталăк килĕшет-и?

**III. Аудиозапись итлени. Урок темипе тата тĕллевĕсемпе паллаштарасси.**

В ĕ р е н т е к е н. Мана та паянхи çанталăк килĕшет, пирĕн хулара та юр васкаса ирĕлет, çуркунне çитни палăрать. Халĕ эпир сирĕнпе илемлĕ юрă итлĕпĕр. Юрă мĕн çинчен-ши? Калама хатĕрленĕр. (*Юрă итленĕ хыççăн ачасем хуравлани.*) Тĕрĕс, ачасем, юрă çурхи кунсене, кайăксем юрланине сăнлать. Апла пулсан паян эпир мĕн çинчен калаçăпăр? (*Ачасем хуравлани.*) Çапла, паян эпир сирĕнпе çурхи кунсем çинчен вĕреннине аса илсе çирĕплетсе хăварăпăр, кайăксем çинчен тĕплĕнрех калаçăпăр, «Кайăк йăвисем» калавпа паллашăпăр, çавăн пекех глаголăн пулас вăхăчĕ çинчен вĕреннине çирĕплетсе хăварăпăр.

**IV. Фонетика зарядки.**

В ĕ р е н т е к е н. Малтанах кăштах чĕлхесене вылятса илер-ха. Ман хыççăн тĕрĕс вулама тăрăшăр. Сăмахсене: *кайăксем, шăпчăксем, кураксем, чакаксем , юлташсем*. Халĕ – предложенисене.

Вĕçсе килчĕç кайăксем:

Шăнкăрчсем те шăпчăксем,

Куккуксем те кураксем,

Тăрисем те чĕкеçсем –

Пирĕн савăк юлташсем!

**V. Çуркуннехи çанталăк çинчен калаçу ирттересси.**

В ĕ р е н т е к е н. Шăнкăрчсем, кураксем, шăпчăксем хăçан вĕçсе килеççĕ?

А ч а с е м. Çуркунне.

В ĕ р е н т е к е н. Çапла, çуркунне. Халĕ эпĕ корреспондент пулăп, сирĕнтен çуркунне çинчен ыйтăп.

Ушкăнсемпе ĕçлени. Рифмăсене, «Хĕвел» кластера çырса пĕтерни. Чи пултаруллă ушкăна палăртса хăварни.

**VI. Кану саманчĕ.**

В ĕ р е н т е к е н. Ывăнтăр пулĕ, куçсене кантарса илер-ха. Вăйă пулăшнипе пĕчĕк туссем çинчен малалла калаçăпăр. Пурте доска умне тухăр. Вырăсла çак вăйă «Ручеёк» ятлă.

1. Хĕл хыççăн мĕн пуçланать?

2. Çуркунне кайăксем ăçтан вĕçсе килеççĕ?

3. Чи малтан мĕнле кайăк вĕçсе килет?

4. Пирĕн вĕсене пулăшмалла-и?

5. Мĕн тумалла? (*Апат çитермелле, сырăшсем, шăнкăрч вĕллисем тумалла.*)

Вĕрентекен хальхи вăхăтра вырăс шкулĕсенче те тăван чĕлхене (тутар-и эс, чăваш-и) вĕренме май пурри çинчен пĕлтерет. «Кайăксем», «шăпчăк», «шăнкăрч» сăмахсем тутарла мĕнле илтĕннине калать. Вĕрентекен вĕсене – «кош-корт», «сандугач», «сыерчык» – доска çине çырса хунă. Чăваш е вырăс, е тутар – вĕсем пурте туслă пурăнни çинчен те каласа хăвармалла.

**VII. Воспитани тĕллевĕ .**

В ĕ р е н т е к е н. Ачасем кайăксем валли мĕн тăваççĕ?

А ч а с е м. Сырăшсем, шăнкăрч вĕллисем.

В ĕ р е н т е к е н. «Кайăксене пулăшма ан ман!» тени вырăсла мĕнле пулать? (*Ачасен хуравĕсем.*) Çулталăкăн кирек хăш вăхатĕнче те кайăксем пирĕнтен пулăшу кĕтеççĕ. Вĕсене апат çитерме, сырăшсем, шăнкăрч вĕллисем тума манар мар! Кайăксене упрар, пулăшар. Çакăн çинчен халĕ калав вуласа тĕплĕнрех паллашăпăр.

**VIII. Текстпа ĕçлесси**.

***1. Çĕнĕ сăмахсемпе ĕçлени.***

В ĕ р е н т е к е н. Калавра çĕнĕ сăмахсем тĕл пулаççĕ. Вĕсемпе паллашар-ха: курăк ăшĕнче – в траве, тĕмĕ ăшĕнче – в кустах, типĕ курăк – сухая трава, йăтаççĕ – таскают, пĕтереççĕ – уничтожают, йăва – гнездо, хăвăл – дупло, тĕк – перо. *(Сăмахсене тĕрĕс калама хăнăхтарасси: сасăпа –* çурма *сасăпа – шăппăн; малтан вĕрентекен калани, кайран – пурте пĕрле.)*

***2. Калавпа паллаштарни***.

В ĕ р е н т е к е н. Ачасем, текста тимлĕ итлĕр, вуласа пĕтернĕ хыççăн эсир калава мĕнле ăнланнине тест ирттерсе тĕрĕслĕп. (*Текста вулать.*)

**Тест**. Кашни предложени хыççăн **+** е **–** паллăсем лартмалла.

1. Кайăксем йăвисене тĕрлĕ вырăнта тăваççĕ.
2. Çынсен сырăшсем тумалла мар.
3. Хĕлле кураксемпе кăсăясем апат нумай тупаççĕ.
4. Çуркунне пирĕн пата сахал кайăк вĕçсе килет.
5. Кайăксем – пире пулăшакансем.
6. Вĕсемсĕр эпир пурăнма пултаратпăр.

Теста тĕрĕсленĕ хыççăн ачасемпе кану саманчĕ ирттерни.

Кайăксем вĕçеççĕ, вĕççеççĕ,
Унтан канма лараççĕ.
Каллех çĕкленеççĕ,
Малалла вĕçеççĕ.

В ĕ р е н т е к е н. Ачасем, халĕ текста хăвăр тĕллĕн çурма сасăпа вуласа тухăр. Сăмахсенче пусăма тĕрĕс лартса вулама хатĕрленĕр. (*Калава саспа вулани.)* Халĕ çак калав тăрăх пĕр-пĕрне ыйтусем парăр та хуравлăр. (*Ыйту –*

*хурав.*) Çуркунне пирĕн пата мĕнле кайăксем вĕçсе килнине тупса вуласа парăр. Вĕсен сассисене уйăрма пĕлетĕр-и эсир?

Кайăк сассисене итлеттерни.

– Ку мĕнле кайăк сасси-ши?

– Ку шăнкăрч сасси.

– Тепĕр кайăк сассине итлесе пăхатпăр. Мĕнле кайăк юрлать?

– Ку тăри сасси.

– Ку тата мĕнле кайăк сасси?

– Ку шăпчăк сасси.

– Ака уйăхĕнче пирĕн тăрăха шăнкăрчсем, тăрисем, чĕкеçсем вĕçсе килеççĕ.

– Çу уйăхĕнче вара шăпчăксем, куккуксем юрă шăрантараççĕ.

– Ку тата мĕнле кайăк сасси-ши?

– Ку курак сасси.

– Вĕсем пирĕн пата чи малтан вĕçсе килеççĕ.

– Кăçал пирĕн тăрăха кураксем хăçан вĕçсе килчĕç-ши ?

– Кăçал вĕсем пуш уйăхĕн пĕрремĕшĕнче вĕçсе килчĕç. Халăхра кураксене çуркунне йыхравçи теççĕ.

В ĕ р е н т е к е н. Кураксем çинчен тепĕр уроксенче калаçăпăр. Питĕ интереслĕ: вĕсем пурте пĕр-пĕрне пĕлеççĕ, шавлă тата туслă пурăнаççĕ. Вырăссен паллă художникĕ Алексей Саврасов та хăйĕн картинине «Грачи прилетели» ят панă.

**Грамматика материалĕ.** Глаголăн миçе вăхăт? Пулас вăхăтăн ыйтăвĕсене аса илесси, калавра туптарасси.

**IX. Çыру ĕçĕ.**

В ĕ р е н т е к е н. Паян урокра кайăксем çинчен нумай калаçрăмăр. Эпĕ сире вĕсем çинчен синквейн çырса пĕтерме сĕнесшĕн.

1. Кайăксем

2. Усăллă, …

3. Юрлаççĕ, .., пулăшаççĕ

4. Кайăксем …. …..

5. Пĕчĕк туссем

В ĕ р е н т е к е н. Ачасем, эсир яланах кайăксен тусĕсем пулма тăрăшăр. Мĕншĕн тесен вĕсемсĕр пурăнма пире питĕ кичем. Упрар пĕчĕк туссене! Халĕ çак сăвă йĕркисене пурте пĕрле вулар.

П у р т е  п ĕ р л е.

Сыхлар кайăксене!

Упрар вĕсене!

Вĕсем пирĕн туссем,

Çут çанталăк ачисем!

**X. Урока пĕтĕмлетни. Вĕренекенсен пĕлĕвне хаклани.**

В ĕ р е н т е к е н. Ачасем, паянхи урокра эпир сирĕнпе мĕнсем çинчен калаçрăмăр? Чăннипех те: «Кайăксем – пирĕн туссем», – теме пултаратпăр-и? Сире урок килĕшрĕ-ши? Эпĕ кашнинех хут листи валеçсе панă. Эсир вĕсем çине халĕ ӳкерчĕк ӳкеретĕр. Енчен те урок сире килĕшрĕ пулсан сарă хĕвел ӳкерĕр. Урок килĕшсех каймарĕ пулсан е ăнланман вырăнсем юлчĕç пулсан хĕвел çумĕнче тĕксĕм пĕлĕт ӳкерĕр. Халĕ, тархасшăн, хăвăр ӳкерчĕксене çĕклесе кăтартăр. Паянхи урокра эсир тарăшса ĕçлерĕр. Ку мана савăнтарчĕ.

**XI. Киле ĕç.** Интернетпа усă курса пĕр-пĕр кайăка халаллană оригами туса хатĕрлемелле е çунатлă туссем çинчен пĕр-пĕр сăвă вĕренсе килмелле.